# Пай çĕрĕсене мĕнле уйăрмалла?

**«Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене çаврăнăша кĕртесси çинчен» федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн ку ĕçе икĕ тĕрлĕ майпа тума пулать: пĕрремĕш – пай çĕрĕсене çĕр хуçисен пĕрлехи пуху йышăнăвĕ тăрăх, иккĕмĕшĕ – харпăр хăй тĕллĕн. Калас пулать, пĕрлехи пуху пулмасан е унта кирлĕ йышăну тумасан кăна харпăр хăй тĕллĕн пай çĕрне уйăрма ирĕк пур.**

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

Практика пай çĕрĕсен харпăрçисем хăйсем тĕллĕн ĕçе пуçăннине кăтартать. Вĕсен мĕн-мĕн тумалла-ха:

– пĕрлехи пуху йышăнăвĕпе пай çĕрне уйăрма май çуккине документсемпе çирĕплетмелле;

– пай çĕрĕсен харпăрçисене хăвăр пая уйăрма шут тытнине пĕлтермелле;

– кадастр инженерĕ патне çĕр уйăрмалли проекта хатĕрлеме, çирĕплетме; çĕр лаптăкĕн чиккине палăртма; йĕркеленнĕ çĕр лаптăкĕн чикĕ планне хатĕрлеме тата çирĕплетме каймалла;

– йĕркеленнĕ çĕр лаптăкне патшалăх кадастр учетне тăратма тата кадастр паспорчĕ илме кадастр палатинче заявлени çырмалла;

– пай пысăкăшне палăртма килĕшӳ тумалла; çĕр участокĕпе усă курас правăна Росреестрăн территори уйрăмĕнче регистрацилемелле.

Хальхи вăхăтра пĕр пай çĕрĕ валли çĕр уйăрас енĕпе проект хатĕрлеме 2550 тенкĕ кирлĕ. Ытти документсемшĕн тӳлев çаплах: куçман пурлăхăн патшалăх кадастрĕнче территорин кадастр планне илме – 300 – 2400 тенкĕ, çĕр уйăрасси пирки план хатĕрлеме – 2500 тенкĕ, пай пысăкăшне палăртни çинчен килĕшӳ тума – 300 тенкĕрен малалла, право тĕлĕшĕнчен пулăшупа тивĕçтернĕшĕн – 500 тенкĕ е ытларах, массăллă информаци хатĕрĕсенче пĕлтерӳ пичетлеме – 600 – 1800 тенкĕ (миçе хутчен тухнине кура). Пайсене çĕр хуçисем пĕр вăхăтра, пĕрле уйăрсан вара укçа-тенке сахалрах тӳлемелле.

Пĕлтерĕшлĕ ĕçе «Пĕр чӳрече» системăпа та йĕркеленĕ. Пай çĕрĕн хуçи е шаннă çын пĕр килĕшӳ тăвать, малалла эпир ытти ĕçе пурнăçлатпăр. Кайран пай çĕрĕн хуçине е шаннă çынна кирлĕ документсемпе тивĕçтеретпĕр.

«Рубикон» организаци шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне куллен 8 сехетрен пуçласа 18 сехетчен ĕçлет. Адресĕ: Вăрнар поселокĕ, Карл Маркс урамĕ, 15-мĕш çурт, 2-мĕш хут. Т. 2-74-70. Электронлă адрес: vur1–kadastr@cbx.ru.

**Т.МИХАЙЛОВА,**
**директор.**

ХАÇАТРА ÇЫРНĂ ХЫÇÇĂН

# Такăр çул сарман ялсем те пур

**«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатăн ака уйăхĕн 7-мĕшĕнчи номерĕнче пичетленнĕ «Каллех çулсем пирки» статьяна тишкернĕ хыççăн Вăрнар район администрацийĕ çапла пĕлтерет:**

Чăваш енре тата Вăрнар районĕнче автомобиль çулĕсене тăвассин тĕп тĕллевĕ – ялсене район центрĕсемпе, Чăваш Республикин тĕп хулипе çыхăнтарасси.

Вăрнар – Вăрманкас – Катăш автоçула Вăрманкаспа Катăша район центрĕпе, Вăрнар поселокĕпе тата Шупашкар хулипе çыхăнтарма хывнă. Статья авторĕ пачах та урăхла ăнланнă: асăннă автоçула Мăньял Хапăсри хыт сийлĕ çула тăвас вырăнне хывнă тенĕ.

Мăньял Хапăс ялĕнче урамсенчи çулсен тăршшĕ 9,72 км, çав шутран хытă сийли – 4 км. Танлаштарма – Кӳстӳмĕрте, Чăрăш Ишекре, Юлапăшра, Кивçурт Енĕшре, Çăлкас Кăкшăмра, Хурăн Кăкшăмра хытă сийлĕ пĕр çухрăм çул та çук. Халăх пурăнакан 100 пунктри çулсем 347,945 км тăсăлаççĕ, хытă сийли – 83,87 км кăна. Çавăнпа та çӳлерех асăннă ялсенче хытă сийлĕ çулсем тăвасси питĕ пĕлтерĕшлĕ.

30 çул каялла вăрман урлă строительствăлăх йывăç тата халăх валли вут турттарма ятарласа çул хывнă. Ялсенчи çуртсене газ кĕртнĕрен, пурăнмалли уйрăм çуртсене кирпĕчрен, бетонран çĕкленĕрен ку çул кирлĕ мар. Мăньял Хапăспа Пăртаса вăрман урлă тӳреммĕн çыхăнтаракан хушма автоçула хывни экономика тĕлĕшĕнчен усă памасть, мĕншĕн тесен ку тăрăхра производство хăвачĕсем çук.

Автоçул тунă чух уйрăм требованисене тивĕçтерекен строительствăлăх хăйăрпа усă кураççĕ. Паллах, вырăнти карьерти çеç мар, юханшыв хăйăрĕ те кирлĕ. Аукцион ирттернĕ хыççăн Мăньял Хапăсри хăйăр карьерĕпе усă курма «Вурнарыдорстрой» акционерсен уçă пĕрлĕхĕ тивĕçнĕ.

**В.ГОРБУНОВ,**
**Вăрнар район**
**администрацийĕн пуçлăхĕн**
**пĕрремĕш заместителĕ.**

ШУХĂШ ШĂНКĂРАВĔ

# Лавĕ вырăнтан тапранмасть е Ял çыннине кам хӳтĕлĕ?

**Мĕн тери чăтăмлă вăл ялта пурăнакан. Хăйне кăна мар, хула халăхне те ял хуçалăх продукцийĕпе тивĕçтерме тăрăшать. Çĕр улмине, пахча çимĕçне, тутлă пылне тонни-тоннипе хула пасарĕсене хĕлле те, çулла та ăсатать. Хăйне хисеплеменшĕн кăна час-часах пăшăрханма тивет юлашки вăхăтра ял çыннин.**

Чăн та, республика Пуçлăхĕ патне те çитерчĕç халăхран пухакан сĕт хакне тивĕçлĕ шайра тытмалли пирки, республикăри прокуратура та ĕçлерĕ ку ыйтупа. Результачĕ вара пачах хирĕçле: 2010–2011 çулсенче сĕт хакĕ хĕллехи вăхăтра 16 тенке çитрĕ пулсан, 2011 – 2012 çулсенче 13 тенкĕрен мала хăпармарĕ. Ахăртнех, сĕт завочĕсем каварлашсах пĕр-пĕринпе килĕшӳ туса савăнчĕç пулĕ. Кун пекех пулсан 2–3 е ытларах ĕне усрасси пирки шутлама лекетех пулĕ.

Пĕр-ик çул каялла кăна-ха ялсем каççерен çап-çутă ларатчĕç. Пĕлтĕр кĕркунне вара урама тухма та хăрушă пулса тăчĕ. Ара электриксем килчĕç те урамри пĕтĕм çутта сӳнтерсе кайрĕç. Укçа-тенкĕ нумай тăкакланать имĕш. Эх, пуçланчĕ те вара тамăк! Ирĕксĕрех акăлчан писателĕ Уэллс «Россия во мгле» тенине аса илетĕн.

Пĕр вăхăтра ял пĕтнин сăлтавĕ культура вучахĕсем сӳннинче терĕç. Сӳнмех памарĕç-ха, хăшпĕр çĕрте кивĕ клубсене те кермен пекех юсаса çĕнетрĕç. Сăмахран, Ярмушкари культура çуртне. Ирĕкрен кăна мар, шала кĕрсессĕн те чун савăнать. Кивçурт Мăрат клубĕнче те ялан тенĕ пекех тирпейлĕ те ăшă. Анчах та çав вăхăтрах чылай клуба культура çурчĕ теме хал çитмест. Суйлав умĕн концертсемпе тухса çӳреме тиврĕ. Мĕн тухса тăчĕха куç умне? Кушар Юнтапапа Пуканкас клубĕсем сивĕпе пасарса ларнă, стенисем çинче çăлтăрсем куç хупмалла выляççĕ. Кураканĕсем ăшă кĕрĕксем тăхăннă та пăс кăларса кăна лараççĕ. Артисчĕсем, шереметсем, ташласа та ăшăнаймаççĕ. Пĕри тата концерт хыççăн чирлесе те ӳкнĕ, теççĕ.

Юрать-ха Авшак Элмен клубне хутса ăшăтмашкăн пĕр артистки икĕ михĕ килти çĕр кăмрăкне парса янă. Шăнмарĕç ку клубра. Эй, мăнтарăн, граждан вăрçи вăхăтĕнчи пурнăç таврăнчĕ пулĕ? Çавăн чух вĕтха концерт е спектакль курма вут пуленкисем йăтса кайма тивнĕ. Чăннипех те хĕрхенес килет ку культура çурчĕсенче вăй хуракансене. Çак сивĕ клубсенче кружоксем ĕçлеттерме, концертсемпе спектакльсем хатĕрлеме те ĕлкĕреççĕ. Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене çуралнă кун ячĕпе чыслама та мел тупаççĕ, тĕлĕнмелле чаплă ял уявĕсем ирттереççĕ. Калама пултаратăр, кĕçех çăва тухатпăр – кулянма кирлĕ мар. Анчах та хĕлĕ каллех çитсе те тăрать. Тата халăхра урапана хĕлле, çунана çулла хатĕрлеме хушнă вĕт-ха.

Чирлесе больницăна выртас тесен те икĕ эрне малтан заявка памалла тет иккен. Сипленме те çывăхри больницăсене хупса пĕтернĕ пирки Канаш, Çĕмĕрле, Шупашкар таран каяс пулать. Вилсе выртсан тăван-пĕтен те шыраса тупаймĕ. Çав вăхăтрах нумай пулмасть тăрăшса туса лартнă стационар çурчĕсем пушпушах янраса лараççĕ. Эпир астăвасса, вĕсенче выртма вырăн çитместчĕ. Ахăртнех, халăх сывлăхĕ çултан çул çирĕпленсе пырать пулас?

Влаçра ларакансемпе тĕл пулсан ку ыйтусене сахал мар çĕкленĕ. Итленçи те пулаççĕ, çырса та хунă пулĕ-ха, анчах темшĕн-çке «лавĕ, И.А.Крылов калашле, вырăнтан та тапранмасть».

**А.ЛИВЕНЬ.**

# Саккунсене улшăнусем кĕртнĕ

РАЙОН ПРОКУРАТУРИНЧЕН ПĔЛТЕРЕÇÇĔ

Пĕлтĕрхи июлĕн 11-мĕшĕнчи федераллă саккунпа «Энергие перекетлесси, энерги эффективлăхне ӳстересси тата РФ уйрăм саккун акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунăн 13-мĕш статйине улшăнусем кĕртме йышăннă.

Уйрăммăн илсен, çурт-йĕре шыв, ăшăпа электроэнерги мĕн чухлĕ пĕтернине шутлакан приборсем вырнаçтарассине кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕччен, газ счетчикĕсене лартассине 2015 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен тăснă. Маларах шут приборĕсене вырнаçтармалли вăхăта кăçалхи январĕн 1-мĕшĕччен тесе палăртнăччĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн, газпа тивĕçтерекен организацисен хваттерсен харпăрлăхçисене шут приборĕсене вырнаçтарма сĕнсе çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕччен çырса ямалла. Е хваттер-çурт хуçисем хăйсем газ организацисене прибора лартма ыйтса çырма пултараççĕ. Енчен те граждансем палăртнă тапхăрта шут приборĕсене лартмасан, ку ĕçе ресурссемпе тивĕçтерекен организаци çулталăк хушшинче пурнăçлать.

■

«Наркотиклă тата психотроплă япаласем çинчен» саккуна та улшăнусем кĕнĕ. Вĕсем, тĕпрен илсен, наркотиклă тата психотроплă япаласене хатĕрленĕ, туса кăларнă чух тăтăш усă куракан прекурсорсен çаврăнăшĕн тĕрĕслевне çирĕплетессипе çыхăннă.

Раççейре тĕрĕслевре тытмалли веществосен Переченьне кĕртнĕ прекурсорсене наукăпа вĕрентӳ тĕллевĕпе, эксперт тата оперативлă шырав ĕçĕ-хĕлĕнче кăна усă курма юрать. Ку списокри прекурсорсене вырнаçтарассине, уйăрса парассине организацисем РФ Правительстви палăртнă йĕркепе пурнăçлаççĕ. Организацисен ку ĕç валли лицензи пулмалла.

Прекурсорсен шучĕ улшăннипе çыхăннă хăть мĕнле операцие ятарлă журналсенче регистрацилемелле, вĕсене 10 çул упрамалла.

Аса илтеретпĕр, наркотиклă тата психотроплă япаласен çаврăнăшĕн сферинче саккуна пăснăшăн уголовлă явап тыттараççĕ.

**Е.БОРОДИНА,**
**Вăрнар район прокурорĕн**
**помощникĕ**
**3-мĕш класлă юрист.**

ХУДОЖНИК ШӲТЛЕТ






*И.КИЙКО ӳкерчĕкĕсем.*

